Шупашкар район хаçачĕ ✵ 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ТĂВАН ЕН

146 (9288) № ✵ 2006 çулхи декабрĕн (раштав уйăхĕн) 20-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

✵ Ял хуçалăхĕ

## КУН ПЕК ТУХĂÇПА СУБСИДИ ЛЕКЕССИ ИККĔЛЕНӲЛЛĔ

***Ӳсен-тăран отраслĕнче ĕçлекенсемшĕн кăçалхи çул çăмăл килмерĕ. Пĕрчĕллисемпе пăрçа йышшисем вăйлă аталаннă вăхăтра çанталăк типĕ тăчĕ, пуçтарса кĕртме вăхăт çитсен, çумăр тинке илчĕ. Пирĕн районта лӳшкенĕ пек ытти çĕрте вĕçĕм çуса тăман. Тен, çавăнпах, тĕш-тырăна пĕтĕмĕшле пуçтарса илесси малтан палăртнă пек 20 пин тоннăпа танлашаймарĕ, 16,2 пинпе çырлахрăмăр.***

### ТУХĂÇ ÇАВĂН ПЕКЕХ ПĔЧĔК-ШИ?

Тĕш-тырă культурисен вăтам тухăçĕ гектар пуçне республикипе 18,2 центнер ларнă вăхăтра пирĕн 14,6 центнерпа танлашнине çанталăк çине кăна йăвантарни тĕрĕсех пулмĕ. Хуçалăхсем тухăçа пĕчĕклетсе кăтартни те тĕл пулать. Ĕçси вăхăтĕнче кунсерен пухакан оперативлă даннăй тăрăх цифрăсем пысăк, кайран – пачах расна. Хирĕçлеместпĕр, бункер виçипе ампар виçи пĕр тан лармасть. Пĕрех, йышăнмалла, чееленееççĕ хăшĕсем. Анчах челенни хакла ларма пултарать. Агрономсемпе ирттернĕ районти канашлура çакăн пирки те калаçу пулчĕ. Элиталлă вăрлăх, ӳсен-тăрансене хӳтĕлекен препарат туяннишĕн (удобрение кĕртмен) республика хыснинчен килес çул та укçа уйăрĕç. Анчах, райадминистрацин ял хуçалăх пайĕн агрономĕ А.В.Краснов пĕлтернĕ тăрăх, сахал тухăçлисене субсидилесшĕн мар. Çак шухăша республика шайĕнче палăртнă.

Канашлура Александр Валентинович çĕр улми лаптăкне чакарнине уйăрммăн асăнчĕ. Пĕлтĕрхинчен кăçал икĕ хут каталнă. Статистика органĕсен кăтартăвĕ тăрăх, пĕтĕмпе 222 гектар вăл. Тухăç гектартан 88,7 центнер (республикăра – 180,7 центнер). Ку культурăна мĕнпур лаптăк çинчен пухса илейменнисем пулнă. «Иккĕмĕш çăкăр» килес çул тата сахалланмалла, унпа 2-3 хуçалăхран ытла ĕçлесшĕн мар. Сăлтавĕ – пайтине курайманни.

Пахча-çимĕçпе те хăпартланмаллиех çук. Уçă вырăнта туса илекенсенчен «Атлашевский» кооператив кăна çине тăрать. Акса-лартнă лаптăксене «Пучах» тата «ЧувашАгроМаркет» шутран кăларнă. Кун пек ларутăрура «Юрать, «Ольдеевская» агрофирма пур» тесен те йăнăш мар.

### МĔН АКАТĂН, ÇАВĂ ШĂТАТЬ ТЕÇÇĔ ТЕ...

Ку шухăша вăрлăх инспекцийĕн районти филиалĕн пуçлăхĕ В.К.Тихонов палăртрĕ. Килес çул валли хурса хăварнă çурхи пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсен пахалăхĕ савăнтармасть. Сорт хутăшĕ нумай. Кондицие декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ларманнинчен виççĕ-тăваттăмĕш пайĕ тасалăх енчен тивĕçтермест. Хăш хуçалăхра епле вăрлăх пулни пирки хаçатăн 140-мĕш номерĕнче таблица пичетленĕччĕ, тепĕр хут чарăнса тăмăпăр. Вăрлăха кондицие лартассипе Кадыков ячĕллĕ, «Слава», «Атлашевский», «Искра» кооперативсем, Свердлов ячĕллĕ колхоз ĕçлеме пуçланă. Вăрлăха çĕнетессипе те тимлемелле хуçалăхсен.

### ТĂПРА ПУЯНЛĂХНЕ ЛАЙĂХЛАТМА ПУЛАТЬ

Палăртмалла, минераллă удобренипе хуçалăхсем çителĕклĕ ĕçлеймеççĕ-ха. Апла, тăпра пулăхлăхне лайăхлатма май пурри пе хăть усă курар. Çапла чĕнсе калать районăн тĕп агрохимикĕ Г.М.Сапунова. Мероприятисене ирттерме бюджетран укçа уйăраççĕ. Шел, анчах пирĕн хуçалăхсем унпа туллин усă курмаççĕ. Глафира Михайловна каланă тăрăх, известь районĕпе 537 гектар (51 процент) сапнă, фосфор – 148 гектар (37 процент). Тăпрана извĕçленисем – «Прогресс», «Искра», Свердлов ячĕллĕ, «Слава», «Чурачикское», фосфорпа пуянлатнисем – «Слава» тата «Букет Чувашии» агрофирмăн Ишлейри филиалĕ. 616 гектар çинче кали сапса лимита 129 процент усă курнă пулса тухать. Кăçал çав ĕçе Свердлов ячĕллĕ, «Прогресс», «Букет Чувашии» агрофирмăн Ишлейри филиалĕ пурнăçланă. Халĕ предприятисен ĕç туса панă «Чувашсельхозхимия» предприятипе татăласси юлать. Ултă предприятин парăмĕ – 472,9 пин тенкĕ.

### ИМ-ÇАМ УНТА-КУНТА УПРАНМАЛЛИ ЯПАЛА МАР

Агрономсен умне лартнă тепĕр задача – хуçалăхсенче им-çама кирлĕ пек упрасси. Çакăн пирки ӳсен-тăрансене хӳтĕлес енĕпе ĕçлекен станцин районти пуçлăхĕ И.В.Дмитриев та, гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру штабĕн пуçлăхĕ В.М.Орлов та каларĕç. Ку тема патне хаçатăн çывăх номерĕсенчен пĕринче уйрăммăн таврăнăпăр.

В.ЭВЕРККИ.

— Декабрĕн 22-мĕшĕ – Энергетиксен кунĕ —

### *ЭНЕРГЕТИКА КОМПЛЕКСĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!*

***Сире професси уявĕпе саламлатăп!***

***Отрасльти предприятисем шанчăклă ĕçлени – экономика аталанăвĕн никĕсĕ тата республикăри халăхăн пурнăçĕн пахалăхĕ. Чăваш Ен малалла талпăнса утнинче сирĕн тӳпе те пысăк. Энергетиксем – яваплă çынсем – пĕр вĕçĕмсĕр тата туллин çутăпа, ăшăпа тивĕçтереççĕ.***

***25 çул каялла Шупашкарти ГЭСăн пĕрремĕш гидроагрегатне хута яни республика историйĕнче пĕлтерĕшлĕ тапхăр пулса тăчĕ. Ку пулăм Чăваш Енри энергетика комплексне çĕнĕ шая хăпартрĕ. Паян, мĕнпур вăя пĕрлештерсен Раççей энергосистемин пĕлтерĕшлĕ объектне татах та эффективлăрах ĕçлеме майсем туса пама пулать.***

***Сире тăван тăрăхăн социаллă-экономика аталанăвне тӳпе хывнăшăн тав тăватăп. Çирĕп сывлăх, çĕнĕ çитĕнӳсем, тăнăçлăх тата телей сунатăп!***

Н.ФЕДОРОВ,
Чăваш Республикин Президенчĕ.

### *ХИСЕПЛĔ ЭНЕРГЕТИКСЕМ!*

***Сире пурне те професси уявĕ – Энергетиксен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп. Çак отрасль халăх хуçалăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни куçкĕретех.***

***Сирĕн ĕçĕр уйрăмах паянхи кун хаклă та кирлĕ – эсир ăшă илсе çитеретĕр.***

***Умри йывăрлăхсене çĕнтерсе халăха пĕр тăтăш энергипе тивĕçтернĕшĕн, çĕршыв умĕнче яваплăхăра туйса хăвăр суйласа илнĕ ĕçре тӳрĕ кăмăлпа тăрăшнишĕн чĕререн тав тăватăп.***

***Малашне те тăван енĕмĕр ырлăхĕшĕн ĕçлессе шанатăп.***

***Ĕçре ăнăçупа çитĕнӳ, ырлăх-сывлăх, кашни çемьене иксĕлми телейпе тату пурнăç сунатăп.***

А.КНЯЗЕВ,
Шупашкар районĕн пуçлăхĕ.

## КНЯЗЕВ ЕРТСЕ ПЫЧĔ

«Ачасем нумай чухне хăйсен ашшĕ-амăшне сăнарлама тăрăшаççĕ. Çывăх çыннисем хаяр шĕвекпе туслă пулсан ывăл е хĕр те çавнах суйласа илесси инçе мар», – тенĕччĕ пĕринче шкулти психолог. Нумай чухне тĕрĕсех килеççĕ çак сăмахсем. Ашшĕ-амăшĕ «йывăррисен» шутĕнче пулсан вĕсен çул çитмен тĕпренчĕкĕсем те саккуна хирĕç ĕçсем туни час-час тĕл пулаççĕ. Çакăн çинче чарăнса тăчĕç те эрне кун ведомствăсем хушшинчи комисси членĕсем. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, шалти ĕçсен пайĕн тата медицина, район администрацийĕн тĕрлĕ пайĕсен ĕçченĕсем ку тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе канашласа вăй хумалли çинче чарăнса тăчĕç, районти лару-тăрупа паллашрĕç.

Ларăва район пуçлăхĕ А.П.Князев ертсе пычĕ. Тĕплĕнрех – çитес номерте.

А.АРДАЛИОНОВА.

## КĔНЕКЕ ÇУЛĔ УМĔН

2006 çул вĕçĕнче «Кĕнекепе – Çĕнĕ çула» Раççей шайĕнчи фестиваль пирĕн республикăра иртесси пирки пĕлтернĕччĕ. Ку эрнене Чăваш Ен шăпах çак акцие халаллать.

Фестивале халалласа ноябрĕн 20-мĕшĕнчен декабрĕн 23-мĕшĕччен ЧР Правительствипе массăллă коммуникаципе пичетĕн Федераллă агентстви пуçарнипе шкулсенче «Юлташ патне – çыру» конкурс ирттереççĕ. Унта вара пирĕн район ачисем те хутшăнчĕç. Анат-Кĕнер шкулĕнчи Илья Никитинпа Дарья Кузьминан (вĕрентекенĕ – В.С.Никитина), Кӳкеçри 1-мĕш номерлĕ шкулти Вера Васильеван (Н.Г.Пименова) ĕçĕсене республикăри комиссие тăратрĕç те ĕнтĕ.

Декабрĕн 21-мĕшĕнче Кӳкеçри шкул-интернатра вĕренекенсем Галина Белгалис çыравçăпа тĕл пулĕç. Çавăн пекех ялти пур модельлĕ библиотекăсенче «Костя Ника. Время Лета» фильм кăтартĕç.

А.СУСМЕТ.

## *ПЛЕНУМ ЙЫШĂНĂВĔ*

Районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн декабрĕн 14-мĕшĕнче иртнĕ черетлĕ пленумĕ ветерансен организацийĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе малашне те ĕçлеме йышăннă, ветерансен канашĕсене ытларах тивĕçлĕ канăва тинтерех кайнă пенсионерсене кĕртме сĕннĕ. 2007 çулхи пĕрремĕш кварталта ветерансен канашĕсен анлă ларăвĕсене Чăваш Республикинчи тата районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен организацийĕсене туса хунăранпа 20 çул çитнине тата Хĕрлĕ Çар 65 çул каялла нимĕç фашисчĕсене Мускав патĕнчен çапса ыватнине халалласа ирттермелле.

Районти ветерансен организацийĕн канашĕн президиумĕнче тата унăн пуçламăш организацийĕсен ларăвĕсенче çамрăк ăрăва 2006-2010 çулсенче патриотла воспитани парас тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçсен планне кашни кварталтах сӳтсе явмалла.

Çавăн пекех пленум районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсене 2007 çулта «Тăван Ен» хаçата илсе тăмашкăн çырăнма чĕнсе каланă.

И.ПАВЛОВ, районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председателĕ.

## КУЛЬТУРА ÇУРТĔНЧЕ КАПИТАЛЛĂ ЮСАВ

Октябрь вĕçĕнче районти культура çуртĕнче капиталлă юсав ĕçĕсем пуçланчĕç. Район бюджетĕнче кăçал ăна валли укçа пăхса хуман пулин те, мачча ишĕлме тытăннине кура «Волготрансстрой» ООО подрядчик хăвăрттăн ĕçе тытăнчĕ. Маччапа стенасене, сценăна çĕнетнисĕр пуçне культура çурчĕ çумне пристрой купаласа «нушник» тăвассине те пăхса хунă. А.В.Браньков прораб ертсе пыракан бригада, унта 5 çын, ĕçе çĕнĕ çулччен вĕçлеме палăртать.

Тунти кун кунти лару-тăрупа паллашма район ертӳçи А.Князев кĕрсе курчĕ. «Чи кирли – ĕçе пахалăхлă пурнăçлани. Подрядчикпа пĕремĕш хут ĕçлеместпĕр ĕнтĕ»,– палăртрĕ Анатолий Пантелеймонович. «Волготрансстрой» директорĕ В.А. Николаев пĕлтернĕ тăрăх, мĕнпур ĕçсене пурнăçлама 870 пин тенкĕ палăртса хунă.

А.ТИМОФЕЕВА.

## *ПАЯН – МИНИСТЕРСТВО КУНĔ*

Районта паян Чăваш Республикин Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министерствин кунĕ иртет. Район пуçлăхĕ ертсе пыракан ĕçлĕ ушкăн Ленин ячĕллĕ колхоз, «Водстрой» ПМК, «Чăваш бройлерĕ» АУО ĕç коллективĕсемпе тĕл пулать. Район ертӳçин пĕрремĕш çумĕ А.Егорова ушкăнĕ «Прогресс» АХОна, Янăш шкулне тата «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхне çитсе курнăçать.

Министерство кунĕн тĕп ыйтăвĕсенчен пĕри – ЧР бюджет политикин тĕп енĕсене пăхса тухасси. Граждансене йышăнассин çĕнĕ йĕрки, çавăн пекех çырăнтару кампанийĕ епле пынипе паллашĕç.

А.ИЗМАН.

✵ Республикăра

## ПРОФСОЮЗСЕН – ÇĔНĔ ЛИДЕР

Иртнĕ эрне варринче Чăваш Республикинчи профсоюзсен черетсĕр 25-мĕш конференцийĕ пулнă. Тĕп ыйту – Патшалăх Канашне суйланнă А.В.Щербаков вырăнне çĕнĕ председатель çирĕплетесси. Конференци ку вырăна нумай çул социаллă политика министрĕн çумĕ пулса ĕçленĕ Анатолий Валентинович Коршунова суйланă.

**Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх**

***Юн кун, декабрĕн 20-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать
кăнтăрла –7
çĕрле -8

***Кĕçнерни кун, декабрĕн 21-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать
кăнтăрла –6
çĕрле –6

***Эрне кун, декабрĕн 22-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать
кăнтăрла –2
çĕрле –4

***Шăмат кун, декабрĕн 23-мĕшĕ***
юр çăвать
кăнтăрла 0
çĕрле –4

✵ Наци проекчӗ

# ВӖРЕНТЕКЕНСЕН ПУЛТАРУЛӐХӖ УÇӐ УРОКРА ПАЛӐРЧӖ

***«Вӗренӳ» наци проекчӗпе килӗшӳллӗн шӑмат кун районти пур шкулта та уçӑ алӑксен кунӗ иртрӗ. Иккӗмӗш килсенче РФ Президенчӗн премине тата ЧР Президенчӗн грантне илме хӑйсен кандидатурине тӑратакансем тата ыттисем те уçӑ уроксем пачӗç. Ашшӗ-амӑшӗ, попечитель канашӗн членӗсем, шкул çунатти айӗнчен вӗçсе тухса кайнисем вӗрентекенсен ӗçӗ-хӗлӗпе паллашса хакларӗç.***

Районти вӗренӳ управленийӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх, хальлӗхе Атайкассинчи, Тренккассинчи, Çӗньял-Покровскинчи тата Кӳкеçри 1-мӗш номерлӗ шкулсем 1 миллион тенкӗ илмешкӗн документсене хатӗрлени çинчен паллӑ. Педагогсене илсен те 100 пин тенкӗне илес текенсен йышӗ самай пулни курӑнать. Паянхи кун тӗлне çӳлерех асӑннӑ шкулсенчен тата Тутаркассипе Кӳкеçри лицейрен пӗтӗмпе 20 яхӑн вӗрентекен хӑйсен кандидатурине тӑратнӑ. Вӗсен йышӗ татах та ӳсме пултарать.




*Ачасем урока хаваспа çӳренине ашшӗ-амӑшсем те курса савӑнчӗç.*

Обществӑлла экспертиза кунӗнче вара мана Кӳкеçри 1-мӗш номерлӗ шкулта пулма тӳр килчӗ. Кунта 777 вӗренекене 64 педагог пӗлӳ парать. Пысӑк категориллӗ талантлӑ педагогсем чылай. Çавна май премие илме кандидатурисене тӑратакансен хисепӗ те пысӑк. 10 учитель документсене хатӗрлесси паллӑ: Т.В.Мокина, Л.Б. Елисеева, Н.Г.Пименова, Н.А. Вострико, И.Г.Курникова, К.И. Иванов, В.И.Кузьмина, А.Т. Васильева, Н.В.Степанова, Л.В.Андреева.

Уçӑ уроксене ашшӗ-амӑшӗсем нумайӑн килни савӑнтарчӗ. Кунта пӗр вӑртӑнлӑх та пур – çак шкултан вӗренсе тухнӑ ачасем каяллах педагог пулса кунта килеççӗ (унашкаллисем 20 ытла), ыттисем вара ачисене те ку шкулах çӳретме тӑрӑшаççӗ. Çакна попечитель канашӗн членӗ И.Ю.Головко та çирӗплетрӗ. Вӑл шкул кӗнеки çине çакнашкал йӗркесем çырса хӑварчӗ: «Эпӗ 1-мӗш номерлӗ шкултан вӗренсе тухса пурнӑçӑн анлӑ çулӗ çине тӑнӑ. Паянхи пурнӑçра вӗренӳ заведенийӗсене суйласа илме майсем пысӑк, анчах эпӗ çак шкул çинчех чарӑннӑ, мӗншӗн тесен кунта тарӑн пӗлӳ панине çирӗппӗнех пӗлетӗп, каларӑм ӗнтӗ, хам çинче туйса курнӑ. Премине илме тивӗçлех çак шкул».

Педагогсен ӗçӗ-хӗлӗ çинчен калакансем те чылайӑн пулчӗç. Акӑ, попечитель канашӗн председателӗ С.В.Петровский Т.В.Мокинапа И.Г. Курникован ӗçӗпе кӑмӑллӑ: «Тарӑн пӗлӳ параççӗ вӗсем. Пӗлтӗр Раççей шайӗпе 9-мӗш классем хушшинче патшалӑх пӗрлӗх экзаменӗпе эксперимент иртерчӗç. Манӑн хӗр, Евгения, 100 бал пухма пултарчӗ. Учитель тӑрӑшмасан пулмасть çакӑ». Районти тӗп больницӑри стоматологи уйрӑмӗн заведующийӗ Е.В.Викторова 9-мӗш, 7-мӗш классен ертӳçисем, Н.Г.Пименовапа Л.Б.Елисеева, çинче чарӑнчӗ: «Вӗсем ирттерекен уроксем чун-хавал тӗлӗшӗнчен пуян. Шыв çине мар, чул çине çырӑнакан пӗлӳ параççӗ вӗсем. Апла премие илме те тивӗçлӗ».

Çапла, нумай лайӑххи каларӗç ашшӗ-амӑшӗсемпе выпускниксем шкулпа педагогсем çинчен. Апла, вӗсем премиллӗ пуласса шанса тӑрӑпӑр.

А.СУСМЕТ.

## ЯЛСЕМ ТӐРӐХ УЛТАВÇӐСЕМ ÇӲРЕÇÇӖ

Çак кунсенче Тушкассинчи 71 çулхи пӗр пенсионерка патне (Муркаш районӗ) икӗ хӗр пырса шакканӑ. Хӗрарӑм алӑка уçнӑ-уçман кусем кӗрсе тӑнӑ та «эпир собес ӗçченӗсем» тесе пысӑк фирма пирки, вӑл пур пенсионера та тавар туянма чылай çӑмӑллӑх пани çинчен калама пуçланӑ. Чӑн та, тӗнчипе паллӑ фирмӑн таварӗсем питӗ йӳнӗ пулнӑ вара. Пирӗн инке пурӗ 3500 тенкӗлӗх: электрочайник, утюг, çӳç касмалли хатӗрсем тата тем те пӗр суйласа илнӗ. Хӗрсем кайсан уçса пӑхать те часах асӑрхать: курупкисем анчах чӑн-чӑн, шалти – йӑлтах Китайра кӑларнӑ ӑптӑрмӑш иккен, çитменнине, питӗ начарри.

Вӑл çавӑнтах вырӑнти милицие шӑнкӑртаттарать. Лешсем хӗрсене районтан тухнӑ чухне тытса чарнӑ. Çирӗмсенчи хӗрсем иккӗшӗ те Пушкӑртстанран пулнӑ. Вӗсем тӗлӗшпе уголовнӑй ӗç пуçарнӑ.

«Регнум» ИА информацийӗ тӑрӑх В.ВАСИЛЬЕВ хатӗрленӗ.

✵ Çул çитменнисем патӗнче

***Район администрацийӗ çумӗнчи çул çитмен ачасемпе тата вӗсен прависене хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен комисси, Раççей Федерацийӗн «Пӑхса тӑман тата право йӗркине пӑсакан ачасене профилактика тумалли никӗс çинчен» саккунне пурнӑçласа, право йӗркине пӑсакан ачасем районта ан пулччӑр тата пӑхса тӑман ачасене тупса палӑртас тесе кӑçалхи 11 уйӑхра çавнашкал ӗçсем туса ирттернӗ.***

## ВУН ПӖР УЙӐХРИ ПӖТӖМЛЕТӲ

Комисси пуçарнипе кашни эрнере ял поселенийӗсенче тата вӗренӳ учрежденийӗсенче профилактика кунӗсем ирттернӗ. Июнӗн 1-мӗшӗнчен пуçласа ведомствӑсем хушшинчи «Подросток» операци пуçласа янӑ. Комисси пурӗ 23 лару ирттернӗ. Тутаркасси, Çӗньял, Шемшер, Ишлей, Атайкасси, Кӳкеç ял тӑрӑхӗсен администрацийӗсен çумӗнчи профилактика канашӗсем çул çитмен ачасемпе мӗнле ӗçленине тӗрӗсленӗ. Кӳкеçри 1-мӗш шкула, Кӳкеçри шкул-интерната, Шӑмӑш, Тренккасси, Тӑрӑн, Шемшер, Иккасси, Çатра-Хочехмат тата Ишлей шкулӗсене çитсе профилактика кунӗсем ирттернӗ. Район администрацийӗн пуçлӑхӗн 2006 çулхи октябрӗн 27-мӗшӗнчи йышӑнӑвне пурнӑçласа кашни ял тӑрӑхӗнчех право йӗркине пӑсакан, пӑхса тӑман, преступлени тӑвакан ачасене палӑртас тӗллевпе профилактика кунӗ иртнӗ.

**Кӑшавӑш** шкулӗнче комиссин анлӑ ларӑвӗ пулнӑ, унта ял тӑрӑхӗн администрацийӗн профилактика канашӗн членӗсем, прокуратурӑран, шалти ӗçсен пайӗн çул çитмен ачасемпе ӗçлекен инспекторӗсем хутшӑннӑ. Çавӑн пекех комисси членӗсем Тутаркасси, Шемшер, Атайкасси, Ишлей, Кӳкеç ял тӑрӑхӗсен администрацийӗсен профилактика канашӗсен ларӑвӗсене хутшӑннӑ. Çул çитмен ачасен умӗнче право ыйтӑвӗсемпе тата наркомание, пирус туртассине, эрехсӑрана хирӗçле профилактика тӑвас, сывӑ пурнӑç йӗркине сарас тӗллевпе калаçусем, лекцисем ирттернӗ, право йӗркине пӑсакан, уроксене сиктерекен, çул çитмен ачасен комиссийӗнче учетра тӑракан ачасемпе уйрӑммӑн калаçнӑ.

**Паянхи** кун тӗлне комисси ачасене йӗркеллӗ пӑхса ӳстерме пултарайман 52 çемьене шута илнӗ. Кунсӑр пуçне тепӗр 29 çемьене, çав йыша хушмалла, мӗншӗн тесен ашшӗ-амӑшӗ ачасене тивӗçлӗ воспитани параймасть. Пӗтӗмпе çак çемьесенче 162 ача. Вӗсемпе тата ашшӗ-амӑшӗпе комисси членӗсем калаçусем ирттернӗ.

**Уголовнӑй** йӗркепе айӑпланӑ çул çитмен ачасем хӑйсен пушӑ вӑхӑтне çӗрлехи вӑхӑтра мӗнле ирттернине палӑртас тӗллевпе пӗрлехи 3 рейд, профилактика тӑвас енӗпе тӑрӑшакан субъектсем клуб учрежденийӗсенче дискотека ирттернӗ чухне 14 рейд йӗркеленӗ.

**Комисси** ларӑвӗсенче профилактика субъекчӗсен ӗçхӗлне тӗрӗслесе тӑрас тӗллевпе шалти ӗçсен пайӗн çул çитмен ачасемпе ӗçлекен уйрӑмӗн пуçлӑхӗн тата инспекторӗсен, вӗренӳ управленийӗн пуçлӑхӗн, Кӳкеçри шкул-интернат директорӗн, Тутаркасси, Апаш, Шемшер, Атайкасси, Çӗньял, Кӑшавӑш ял тӑрӑхӗсен администрацийӗсен пуçлӑхӗсен, халӑха ӗçе вырнаçтаракан центрӑн, ачасене хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен опека тата попечительство органӗн, район пульницин çул çитмен ачасемпе ӗçлекен врачӗн, профилактика тӑвас енӗпе ӗçлекен ытти субъектсен информацийӗсене итленӗ. Комисси çул çитмен 17 ачана ӗçе вырнаçтарма районӑн ӗçе вырнаçтаракан учрежденине направлени панӑ. Право йӗркине пӑсакан ачасене вӑхӑтлӑха тытса тӑракан центра 7 ачана янӑ, пӗр ачана Красноармейски районӗнчи ятарлӑ шкула вырнаçтарнӑ.

**Вӗренӳ** учрежденийӗсенчен 9 ачана шкултан кӑларса яма ыйтнӑ, 8-шӗ тӗлӗшпе ыйтӑва тивӗçтернӗ. 3 ачана каçхи шкула куçарма сӗннӗ.

С.СЕРЕГИН.

## ШӖНЕРПУÇНЕ ПЫРСА КӖРСЕН...

### ХОЛОДИЛЬНИК ТУЯНСА ПАНӐ

Шӗнерпуçӗнчи фельдшер-акушер пункчӗн заведующийӗ Г.Н.Николаева пӗлтернӗ тӑрӑх, Шӗнерпуç, Кивçурткасси тата Коснар ялӗсенче 2002ç. – 5, 2003ç. – 6, 2004ç. – 5, 2005ç. – 8, кӑçал 6 ача çуралнӑ. Килес çул ытларах пулмалла: ача çуратма хатӗрленекен 5 хӗрарӑма шута илнӗ, вӗсене кунта пӑхса тӑраççӗ.



*Е.А.Васильева санитарка, Г.Н.Николаева заведующи, Л.Н.Михайлова акушерка.*

Галина Николаевнӑна Шӗнерпуçне 28 çул каялла, Шупашкарти медицина училищинчен вӗренсе тухнӑ хыççӑн, ӗçлеме янӑ. Ял çыннисем район администрацине ку тӑрӑхра медпункт ӗçлеттернӗшӗн, ӑна препаратсемпе, ӗç хатӗрӗсемпе тивӗçтерсе тӑнӑшӑн тав тӑваççӗ. Нумаях пулмасть кунта çӗнӗ холодильник, контейнер илсе килнӗ.

### КАРЧӐКӖШӖН ПИТӖ ТУНСӐХЛАТЬ

Шӗнерпуçӗнчи вӑрçӑ ветеранӗ Василий Егорович Егоров кӑçал 80 çул тултарнӑ. Хӗрлӗ Çара ӑна 1943 çулхи ноябрь уйӑхӗнче илнӗ, Япони самурайӗсене хирӗç пуçланӑ вӑрçа хутшӑннӑ. Тӑван ялне 1950 çулхи апрельте таврӑннӑ. «Ун чухне пирӗн, фронтовиксен, чун юрлатчӗ, киле чӗрӗ-сывӑ таврӑннӑшӑн савӑннӑ, – каласа парать ветеран. – Каçсерен вӑййа тухаттӑмӑр. Мӗн чухлӗ çамрӑкчӗ! Хӗрсем шап-шурӑ кӗпесемпеччӗ, тӗрӗллӗ саппунсемпеччӗ, сурпансемпеччӗ. Халь ун пеккине театрта çеç куратӑн. Каччӑсем фронтра пуç хунипе хӗрсене мӑшӑр çитмен. Хӑшӗ-пӗри ватта юлассине сиссе хӗрлех ача çуратнӑ. Кил-çурта тытса тӑма, килти хуçалӑхра ӗçлеме кирлӗ пулнӑ...»



*В.Е.Егоров.*

Ваçça пичче те хӗр вӑййӑрах суйласа илнӗ. Пӗрле 50 çул ытла пурӑннӑ, 5 ача çитӗнтернӗ. Шел, мӑшӑрӗ пӗлтӗр пурнӑçран уйрӑлса кайнӑ. Халӗ пӗчченех пурӑнать. «Пӗччен пурӑнма йывӑр пуль, – тетӗп фронтовике. – Тепре авланас кӑмӑл çук-и?» «Çук, – хуравларӗ вӑл. – Лере кайсан хам мӑшӑрах шыраса тупӑп-ха...»

### КУÇ ТУЛЛИ - ИЛЕМ




*Ивановсен хапхи çавнашкал.*

Шӗнерпуçӗнчи Саша Иванов – ку тӑрӑхра пӗрремӗш художник. Çакна вӑл хӑйсен хапхи çине сӑрӑпа тунӑ ӳкерчӗксемпе çирӗплетсе панӑ. Чӑн та, кӳршӗ–аршисем вӗсене Саша мар, ашшӗ тунӑ теççӗ. Произведенисен чӑн-чӑн авторне пирӗн корреспондент та тӗпӗ-йӗрӗпех палӑртайман, мӗншӗн тесен ашшӗ авторӗ кам пулнине уçӑмлах каламарӗ. Мӗнех, тӗнчипе паллӑ Леонардо да Винчи ӗçӗсене те тӳрех пӗр çӗре пухса пӗтерейменӗ.

### ХВАТТЕРСЕМ ТӐВАÇÇӖ

Шӗнерпуç ял администрацийӗ пулнӑ икӗ хутлӑ çуртра 8 хваттер (пӗр пӳлӗмли – 4, икӗ пӳлӗмли– 4) пулмалла. Çурт тӑррине кӑçал çӗнӗрен витнӗ. Хваттерсене килес çул туса пӗтермелле.

Ю.ЮМАН.

Педагогика

# КЛАВДИЯ ПАВЛОВНА ТĔСЛĔХĔ

## *Е МАЛ ĔМĔТПЕ УТАКАН*

### ПУÇЛАМĂШĔ

Нумай-и, сахал-и – вăтăрмĕш çул Клавдия Павловна Скворцова çитĕнекен ăрăва вĕрентсе ӳстерес ĕçре. Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухсан çамрăк специалиста Çĕньял-Покровскинчи шкула йышăнчĕç. Кунта вăл пысăк опытлă Н.Н.Баранникова, М.А.Смирнова учительсемпе юнашар ĕçлерĕ. Ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентрĕ, класс тата литературăпа драма кружокĕсен, шкул ачисен производство бригадин, учительсен профсоюз комитечĕн ертӳçи пулчĕ. Çав вăхăтрах ăна ялти çамрăксен хушшинче воспитани ĕçне йĕркелесе пыма шанчĕç. Клавдия Павловна вĕрентӳпе воспитани ĕçне шкулта та, ялти клубсенче те тĕплĕн шухăшласа туса пычĕ. Темиçе хутчен те районта, республикăра ирттернĕ конкурссемпе ăмăртусене шкул ачисене хутшăнма пулăшрĕ. Кашни хутĕнчех пĕлӳпе пултарулăха кăтартса унăн вĕренекенĕсем грамотăсемпе дипломсем çĕнсе илнĕ. «Тепĕр чухне ашшĕ-амăшĕсем те хăйсен ачисен пултарулăхĕ пирки иккĕленни пулнă. Кулленхи ĕçре асăрхаса пырса вĕренекенĕн ырă енĕсене аталантармалли майсене тупма тăрăшаттăм», – аса илет çав кунсене Клавдия Павловна.

Вăл ачасен пултарулăхне аталантарас енĕпе ĕçлекен районти центр, вĕрентӳ пайĕн специалисчĕсем ĕçлерĕ. Районти вĕрентӳ пайĕнче уншăн çитĕнекен ăрăва пăхса ӳстерес тата учительсемпе, ашшĕ-амăшĕсемпе ĕçлес тĕлĕшпе пуян опыт пухнă Г.В.Николаев, К.В.Фаизова, В.Е.Марасанов, М.Е.Иванова, А.С.Иванов, З.С.Петровская, И.З.Стеклов, Г.П.Арсентьева ырă тĕслĕх пулса тăнă. Вĕсемпе юнашар ĕçлесе Клавдия Павловна педагогика пĕлĕвĕсене пурнăçа кĕртсе пыма хăнăхнине кăтартнă, ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасене пăхса ӳстерес ĕçе тĕплĕн йĕркелесе пынă.

Вăл чылай вăхăт çул çитмен ачасемпе çамрăксен районти комиссийĕн членĕ те пулчĕ. Сахал мар вырăна тухса ыйтусене татса панă, йăнăш çул çине тăма, вĕренӳрен пăрăнма пуçланă ачасемпе чун-чĕререн калаçнă, хăшĕсене çавăтса вĕренме яни те пулнă.

Пĕррехинче Клавдия Павловнапа автобус кĕтсе тăраттăмăр. Сасартăк çăмăл автомашина пырса чарăнчĕ, унтан çамрăк çын тухрĕ. Вăл пире алă тытса сывлăх сунчĕ. «Паллаймарăм-ха сире», – терĕ ăна Клавдия Павловна. «Эпĕ Ишлей тăрăхĕнчен, – пĕлтерчĕ хăй çинчен çамрăк çын. – Аса илĕр-ха вун пилĕк çул каялла пĕрмай килтен тухса каякан ачана, çавă пулатăп эпĕ. Эсир манпа темиçе хутчен те юнашар ларса калаçнă. Эпĕ вара юриех килтен тухса тараттăм. Пĕррехинче çапла каларăр: «Ачалăхпа çамрăклăх иккĕ килмеççĕ. Çамрăкла вĕренни пуçра юлать, çулсем кайсан вĕренни юр çине çырăнать». Сирĕн сăмахсем чылаях шухăшлаттарчĕç. Шкултан та, университетран та чиперех вĕренсе тухрăм. Халь фирма ĕçне йĕркелесе пыратăп. Сире яланах ырă сăмахсемпе аса илетĕп». «Ман асра эсир ача чухнехи сăнпа юлнă, çавăнпа тӳрех уйăрса илеймерĕм. Эпĕ хавас эсир пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илнишĕн, – терĕ Клавдия Павловна. – Ăнăçусем, ырă сывлăх сунатăп сире». Çамрăк çын пире çул çинче тăратса хăвармарĕ, кил умне çитиех ăсатса ячĕ. Çул тăршшĕпех вăл хăй тăрăшса вĕренни, çар службинче пулни, Клавдия Павловна ăна панă канашсем пурнăçра усăллă пулни çинчен аса илсе пычĕ, хăнана чĕнсе хăварчĕ.



*2006 çулта шкулсенче вĕренекенсен республикăри «Excelsior» наукăпа практика конференцийĕнче. Сулахайри халь 6-мĕш класра вĕренекен Ксения Евгеньева, сылтăмри – К.П.Скворцова.*

### ЙЫВĂР АЧАСЕМПЕ

Тепĕр чухне биографире çынран хăйĕнчен килмен тĕрлĕ самантсем йĕр хăвараççĕ. Кӳкеçри иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкул уçăлсан педагогикăра анлă усă куракан «йывăр ачасем» ăнлава тивĕçлисем тупăнкалама пуçларĕç. Сăлтавĕ – шкул микрорайонĕ çĕнĕ, унта пурăнакансем пĕр-пĕрне сахал пĕлеççĕ, хутшăнусем йĕркеленсе çитмен. Ачасем обществăлла йĕркене пăсни те тĕл пулкалатчĕ. Ун чухнехи шкул директорĕ Г.В.Николаев Клавдия Павловнăна учительте ĕçлеме чĕнсе илчĕ те «йывăр ачасем» валли ятарласа йĕркеленĕ класа ĕçлеме ячĕ. Икĕ вĕренӳ çулĕнче çак ачасем ыттисемпе танах ĕлкĕрсе пыма пуçларĕç, хăйсене йĕркеллĕ тытма хăнăхрĕç. Ачасем ырă еннелле хăвăрт улшăннинчен ашшĕ-амăшĕсем те тĕлĕннĕ.

Учительсенчен нумайăшĕ уроксене лайăх хатĕрленсе ирттерет, анчах кашни ачан кăмăлне ырă еннелле çавăрмалли майсемпе мелсене тӳрех алла илеймест. Ку вăл педагогикăпа психологире вăрттăнлăх мар. Çавăнпа чылай шкул ертӳçисем ку ĕçе пур учителе те шанса памаççĕ.

Паллах, ĕçре халăх йăли-йĕркине лайăх пĕлни, пурнăçа сăнама, хăйне тĕллĕн наукăри çĕнĕлĕхсене алла илме тăрăшни нумай пулăшать. Кирек мĕнле самантра та Клавдия Павловна кашни ача валли ĕç тупма тăрăшать. «Кашниншĕн ачалăх пурнăçра ырă йĕр хăвармалла. Çын ача чухне пухнă ăспа ĕмĕрне ирттерет, çитĕнсен çав ăса малалла аталантарса тарăнлатать. Ăс-тăн ача чухне пуçра никĕсленет, ăна çирĕплenme ĕç пулăшать, çавăнпа çыннăн кăмăл-туйăм сипетлĕхĕпе çирĕплĕхĕ ĕмĕр тăсăлаççĕ», – тет К.П.Скворцова. Ырă шухăшпа куллен уроксене, класпа шкул тулашĕнчи ĕçсене йĕркелет Клавдия Павловна. Вăл методика тĕлĕшĕнчен хатĕрлесе пичетленĕ ĕçсен пуххисем республикăри тата унăн тулашĕнчи учительсем хушшинче сараласçĕ.

### ÇĔНĔ ПРЕДМЕТА «ПАРĂНТАРАТПĂР»

Вунă-вун пилĕк çул каялла тăван ен культурин урокĕсенче усă курмалли материалсем çукпа пĕрехчĕ. Ку ыйтăва районти вĕрентӳ пайĕн методика кабинетĕнче, республикăри вĕрентӳ институтĕнче – учительсен пĕлĕвне ӳстермелли курссенче темиçе хутчен те хускатма тивнĕ. Районти учительсемпе А.Г.Григорьев, М.И.Скворцов, Е.В.Васильев, Г.А.Никитин, Р.Я. Яковлев ăсчахсем пулăшнипе тăван ен культурине вĕрентме кирлĕ плакатсем, сценарисем, программăсем тума тытăнтăмăр. Ку ĕçе Клавдия Павловна та хастар хутшăнчĕ. Районта чи малтан уроксене халăх йăли-йĕрки майлă ирттерме, видеокамерăпа çырма пуçларĕ. Ку ĕçе ун чухне республикăра тытăнманпа пĕрехчĕ. Тăван ен культурине тарăнрах вĕрентес тĕллевпе усă уроксем хатĕрлесе ирттерме пуян опыт пухнă учительсене ыйтаттăмăрччĕ. К.П.Скворцова, З.В.Кузьмина, А.В.Ишова, Р.А.Евдокимова, Г.Н.Айзов, Э.Г.Иванова, В.П.Ермаков, Е.Н.Ермакова, Ю.Н. Лыкова тата ытти учительсем ятарласа темăсем илсе практикăлла ĕçсене йĕркелесе кăтартрĕç. Чылай чухне уроксене тишкерме К.П.Скворцована сĕннĕ, мĕншĕн тесен вăл ку енĕпе методикăна хăвăрт алла илчĕ.

Пĕррехинче районти шкулсенче тăван ен культурине вĕрентекен учительсемпе шкул ачисен «Акатуй» уявне Кӳкеçри стадионта ирттерме йышăнтăмăр. Уяв программисене çирĕме яхăн шкултан тăратрĕç. Пĕтĕмĕшле уяв сценарине тума килĕшекен тупăнмарĕ. Клавдия Павловнăпа иксĕмĕр ку ĕçе пурнăçларăмăр, фильм ӳкерме хатĕрлесе çитертĕмĕр те районти методика кабинечĕпе республикăри вĕрентӳ институчĕн кафедрисен ларăвĕсенче пăхса тухма тăратрăмăр. Вĕренекенсен уявĕ ăнăçлă иртрĕ. Фильм тăвас ĕçе К.П.Скворцова уйрăмах нумай хутшăнчĕ: вăхăтне те, укçи-тенкине те шеллемерĕ. Тĕрлĕ сăлтавсене пула вĕрентӳ пайĕн методика кабинечĕ ăна фильмшăн тӳлеймерĕ пулин те, шкулсене кăтарту хатĕрне çитерсе патăмăр. Çакна пăхмасăр учительница çĕнĕрен те çĕнĕ материалсем хатĕрлерĕ, Кӳкеçри иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкулта тăван ен культурине вĕрентме методика тĕлĕшĕнчен пуян класс-кабинет йĕркелерĕ.

### ШКУЛ ĔÇ ЙĔРКЕЛӲ

Унăн Кӳкеçре ĕçлемелле те ĕçлемеллеччĕ, анчах ăна Çатра-Хочехматри вăтам шкула директор çумĕнче ĕçлеме чĕнсе илчĕç. Çичĕ çул çак ĕçре вăй хучĕ. Шкул директорĕпе Н.В.Димитриевапа унăн çумĕ К.П.Скворцова учительсен пултарулăхне уçса палăртас тата малалла аталантарас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлерĕç, çакна республикăри Вĕрентӳ институчĕн, Чăваш патшалăх педагогика университечĕн кафедрисем те палăртрĕç. Çатра-Хочехматри вăтам шкулăн вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн опытне пĕтĕмлетсе Вĕрентӳ институчĕн шкул ĕç йĕркелӳ кафедри наукăпа практика конференцине ирттерчĕ, районти вĕрентӳ пайĕн методика кабинечĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен директорĕсемпе вĕсен çумĕсен семинарĕсене йĕркелерĕ.




*2006 çул. Апаш культурине халалласа ирттерекен республика шайĕнчи конференцие хутшăнакансен пĕр ушкăнĕ. Иккĕмĕш ретри сулахайран пĕрремĕшĕ К.П.Скворцова, сылтăмран иккĕмĕшĕ – çак йĕркесен авторĕ.*

### ВОСПИТАНИ ĔÇНЕ ТВОРЧЕСТВО ПУЛĂШАТЬ

Чăваш чĕлхипе литературa тата тăван ен культури урокĕсенче ачасене пĕлӳ, ăс-тăн панипе пĕрлех Клавдия Павловна вĕсене пултарулăха тĕрлĕ енчен аталантарма пулăшать. Вунă çула яхăн вăл ертсе пынипе шкулта театр студийĕ ĕçлет. Спектакльсен сценарийĕсене учительница хăех хатĕрлет, режиссер ĕçĕсене те тăвать. Юлашки вăхăтра Шоркка-ри ваттисен çуртĕнче, Сарапакасси ял библиотекинче Клавдия Павловна ертсе пынипе çамрăк артистсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Тĕрлĕ çулсенчи çынсем вĕсен концертне хапăл туса кĕтсе илчĕç, пысăк хак пачĕç.

Ачасене тавракурăма малалла аталантарма пулăшас тесе Клавдия Павловна темиçе хутчен те поэтсемпе, художниксемпе, артистсемпе, ал ĕç ăстисемпе, тĕпчевçĕсемпе тĕл пулу йĕркеленĕ. Çулсерен ачасене республикăра ирттерекен наукăпа тĕпчев конференцине хутшăнма пулăшать. Унта О.Гладкова, Т.Димитриева, А.Гаврилов, Е.Кузьмина, О.Трифонова, К.Евгеньева вĕренекенсем тĕпчев тума, шухăша уçса пама пĕлнине стендсем çинче кăтартса пачĕç. Ачасем хăйсен проекчĕсене конференцин висĕ турĕнче те аван хӳтĕлерĕç. Ольга Гладкова халĕ – ял хуçалăх академийĕн студентки. Кăçал вăл студентсен Атăл тăрăхĕнчи конференцине хутшăнса малти вырăна тухнă. Ӳсĕм тума çăмăл мар: чăтăмлăхпа пĕрлех наука тĕлĕшĕнчен тарăн пĕлӳ илни кирлĕ. Клавдия Павловна шкулти тĕп ĕçе пурнăçласа пынипе пĕрлех республикăри аслă вĕренӳ заведенийĕсем ирттерекен наукăпа практика конференцийĕсене тăтăшах хутшăнать.

Ку чухнехи пурнăç пĕр вырăнта тăма хушмасть, вĕрентӳпе воспитани ĕçне çĕннине алла илсе йĕркелессишĕн вăхăтпа туллин усă курмалла. Ĕç планĕ К.П.Скворцова учительницăн яланах тĕрлĕ енлĕ. Çав вăхăтрах вăл наука статйисем çырса пичете хатĕрлет. Пĕр вĕçĕм ĕçшĕн хыпăнса çунма, паллă ĕнтĕ, вăй-хал, пĕлӳ, анлă тавракурăм кирлĕ. Малалла тинкерсе утма мал ĕмĕтлĕ пулни пулăшать К.П.Скворцова учительницăна. Мал ĕмĕтпе утакан пурнăç таппинчен юлмасть, кирек мĕнле самантра та йывăрлăхсене çĕнтерме вăй-хал тупать.

К.ОВЧИННИКОВА,
педагогика наукисен кандидачĕ.

